## ШУПАШКАР ХĔРĔСЕМ

*В. Урташ*

Мĕншĕн чун туртать-ши тетĕр
Аслă Атăл хĕррине?
Эх, ăçта курас-ши тетпĕр
Юратсассăн пĕр-пĕрне?

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Савăнмашкăн,
Юратмашкăн
Пирĕн çук-и юрăсем!

Мĕншĕн пит хитре-ши тетпĕр
Чăваш халăх тĕррисем?
Тĕррине пĕлетпĕр тетпĕр
Шупашкарăн хĕрĕсем.

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Мухтанмашкăн,
Савтармашкăн
Пирĕн çук-и тĕрĕсем!

Мĕншĕн пит хитре-ши тетпĕр
Сар хĕрсенĕн тумĕсем?
Çипуçне çĕлетпĕр тетпĕр
Шупашкарăн хĕрĕсем.

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Тумланмашкăн,
Туй тумашкăн
Пирĕн çук-и çипуçсем!

Мĕншĕн пит хитре-ши тетпĕр
Шупашкар урамĕсем?
Çурт-йĕрне çĕклетпĕр тетпĕр
Шупашкарăн хĕрĕсем.

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Çурт лартмашкăн,
Ĕç тумашкăн
Ылтăн мар-и аллăрсем!

Мĕншĕн пит ăста-ши тетпĕр
Пирĕн тантăш-туссене?
Каччăсем савмаççĕ тетпĕр
Ăста мар пикесене.

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Эпир мар-и,
Эсир мар-и
Шупашкар илемĕсем!

*Урташ, В. Шупашкар хĕрĕсем : [сăвă] // Урташ, В. Ĕмĕрĕмĕр çитсе пынăран / В. Урташ. – Шупашкар, 1983. – С. 75-77.*